Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

69 (7386) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи августăн (çурла) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Улшăнать кунсерен Муркаш Ен

## "Вăт, ку пасар-тăк пасар"





Тĕлĕнсе те савăнса тухрĕç ĕнер район центрĕнчи «Моргаушавтотехсервис» территоринче вырнаçнă пасартан тавар туянакансем.

– Кунта пулнă хыççăн малтанхи пасара каясах та килмест, - кăмăллăн калаçать Муркашра пурăнакан хĕрарăм. – Сутуçисемпе таварĕсене йӳнетме калаçса татăлма та пулать.

– Халăх чăнах та нумай-и? – ыйтатăп тепĕр хут унран.

– Сутаканĕсем те, туянаканĕсем те лăк туллиех, – пулчĕ хурав.

Кăштах иккĕленме сăлтавĕ те пурччĕ çав. Иртнĕ ытлари кун Муркаш пасарĕн 2-мĕш пайне, шкул ярмăрккине уçнă тĕле вырăнти предпринимательсем хăйсен суту-илӳ киоскĕсене куçарма тăхтаса тăчĕç.

Халиччен малтанхи вырăнта сутă тума хăнăхнăскерсем çĕнĕ çĕрте тавар туянакансем пулмасран шикленчĕç-ши? Инçерех-çке, текен шухăш канăç памарĕ пулас малтанлăха районти предпринимпательсене те, çынсене те. Эрне варринче пасар ăнсах ĕçлесе каймарĕ.

Ĕнер вара çак территорине илсе çитерекен тротуар тăрăх халăх утрĕ те утрĕ пасара. Инçех тенĕрен, ара, Шупашкарти пасара кайнă чух автовокзалтан чылай утмалла. Инçе, теместпĕр вĕт. Утатпăр. Кунта вара унăн 1-3 пайĕ чухлĕ те утмаллăх çук. Тавар туянакансем валли универмаг умĕнчен тепĕр енне каçсанах пасар алăкĕ. Шалта вар-а-а!!!

Чăннипех те, пасар-тăк пасар. Мĕн пысăкăш территоринче пĕтĕмпех Шупашкартан, республикăн ытти вырăнĕсенчен килнĕ сутуçăсен палаткисем вырнаçнă. Хăвăрах пăхăр-ха, çак ӳкерчĕксене. Мĕн чухлĕ халăх. Кашни хăйне кирлĕ тавара шырать.

– Килĕшет-и çĕнĕ пасарта? – ыйтатăп сутуçăсенчен.

– Кунта лайăх. Тавар туянакансемшĕн меллĕ пултăр, – хуравлать трикотаж изделийĕсене сутакан хĕрарăм.

– Лайăх пулмасăр. Кунта территорине йăлт асфальт сарнă. Уйрăмлăх пур вĕт:



чĕркуççи таран пылчăк çинче тăрса сут та, тирпейлĕ çĕрте, – хуравлать джинссем сутаканни.

– Тавар туянакансем те йышлă вара, – хăй хĕпĕртенине пытармасть шкул сумкисене сутаканнни.

– Нивушĕ леш пасарта эпир пурте вырнаçса пĕтнĕ, – тĕлĕнсе те, савăнса пĕлтерет тюльсем сутакан предприниматель.

– Кунта халĕ "хамăрăннием" килсех вырнаçайман-ха, – тетĕп. Пуçра çав хушăрах шухăш мĕлтлетсе иртрĕ: Каплах пулсан, вĕсем ăçтарах йышăнĕç-ши вырăн? Ара, ĕнер 8.30 сехет валли аякран килнĕ 100 ытла предприниматель сутă тума килсе çитнĕ те-ха.

Пĕр пушă вырăн та юлманпа пĕрех. Ĕнер предпринимательсем пасар территоринчех вырнаçтарчĕç хăйсен машинисене. Кĕçех çакна валли ятарлă вырăн туса параççĕ. Кăнтăрла кунта каллех илемлĕ кĕвĕ-юрă янăрама пуçларĕ. Хальхинче Мăн Сĕнтĕрти "Янаш", хуларан килнĕ артистсем те савăнтарчĕç пасарти халăха. Хырăм выçса кайсан, шашлык ларса çиме те пулать. Ача-пăча валли вĕтĕ кукăль, пирожнăй та сутаççĕ. Пасарĕ пысăк пулнăран такама та тĕл пулса калаçма май пур.

– Тавах район администрацине. Паян пасар вырăн укçине те илмерĕç. Август вĕçĕччен ăна йӳнетнĕшĕн те, – калаçать спорт костюмĕсем сутаканни.

Халăхри пек каласан, "хуласем" (аякран килнĕ сутуçăсем) çĕнĕ пасарта тавар сутма та, туянма та меллине ăнланса илчĕç. Тавар туянакансем те. Вырăнти предпринимательсем те ăнланса илеççех пулĕ-ха. Куратăр пулĕ: сутаканĕсем пулсан, туянаканĕсем те пулаççĕ.

– Вăт, çапла пулмалла та район центрĕ. Тинех кунта тирпейлĕ пулать ĕнтĕ, – тет автобурсан аннă ватă çын, малтанхи пасар еннеле тĕллесе. Ыттисем те ку шухăшпа килĕшеççĕ пулĕ, тетĕп.

Лайăха çын часах хăнăхать тесе ахальтен каламан çав ваттисем.

«Кунта пĕр кун сутнă хыççăн малтанхи вырăна кайса тăрас та килмест». Ку та хуларан тавар сутма килнĕ тепĕр предприниматель шухăшĕ. Тавар туянакансен те пĕр-пĕринпе çурăмпа çапăнса малтанхи хĕсĕк çĕрте çӳрес кăмăл çукки пирки те иккĕленӳ юлмарĕ.

Çитменнине пасар шăматкун та ĕçлет. Меллĕ вĕт çакă тавар туянакансемшĕн. Тепĕр чух унта кайса çынпа тĕл пулса калаçса чуна уçас та килет. Çав хушăрах шутламан çĕртенех килĕштернĕ тавара туянатăн.

Апла пулсан "Моргаушавтотехсервис" территорринчи пасара эрне варринче çеç мар, шăмат кун та пырăр. Промышленность таварĕсен пасарĕ малалла çакăнта пулать. Шкул ярмаркăти те август вĕçĕччене çакăнтах пулать (вырсарни кунсăр пуçне).

**Л. ТУКТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: кĕрлет, шавлать Муркаш пасарĕ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ĕç çи - 2006

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ТĔШ ТЫРĂПА ПĂРÇА ЙЫШШИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС, КĔР АКИ ВАЛЛИ ÇĔР ХАТĔРЛЕС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Кĕрхи культурăсем акма çĕр хатĕрленĕ (августăн 18-мĕшĕ тĕлне, процентпа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 10 | 71 |
| "Волга" | 46 | 100 |
| «Восток» | 42 | 100 |
| «Герой" | 49 | 24 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 100 | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 29 | 55 |
| Ильич яч. хис. | 42 | 86 |
| "Колос" | 3 | 60 |
| Ленин яч. хис. | 8 | 73 |
| "Лидер" | 20 | 28 |
| "Нива" | 67 | 5 |
| "Оринино" | 50 | 26 |
| "Передовик" | 33 | 94 |
| "Свобода" | 44 | 40 |
| "Сеятель" | 6 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 31 | 76 |
| ООО АФ "Рассвет" | 25 | 83 |
| ОАО АФ "Нива" | 9 | 0 |
| "Ударник" | 33 | 80 |
| "Хлебороб" | 25 | 67 |
| Чапаев яч. хис. | 30 | 100 |
| «Чемеево» | 22 | 7 |
| Чкалов яч. хис. | 9 | 140 |
| **Районĕпе** | **30** | **64** |

**Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 5187 гектар çинче (планпа 17442 гектар) çулнă тата вырнă. Çав шутран кĕрхи культурăсенчен тулăна 1002 гектар çинче (91 процент), ыраша 675 гектар çинче (75 процент), çурхи культурăсенчен тулăна 267 гектар çинче (5 процент), пăрçана 198 гектар çинче (26 процент). «Колос», Ленин яч. хис., «Сеятель», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче, «Нива» агрофирмăра ĕçсем вăрах пыраççĕ.**

**Нумай çул ӳсекен курăксене 10450 гектар çинчен пухса илнĕ (95 процент). Пĕр çул ӳсекен курăксене 1358 гектар çинче (77 процент) çулса пухнă.**

Пултаруллисене хавхалантарма

## Çĕртме çĕнтерӳçисем валли

2007 çулхи ака-суха ĕçĕсенчи вăхăта перекетлес, çитес çулхи тыр-пул хăй хаклăхне чакарас, çум курăксене пĕтерес, ял хуçалăх культурисен тăшманĕсемпе чир-чĕрне пĕтерес тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи августăн 16-мĕшĕнчи 331 № йышăнăвĕпе 2006 çулхи августăн 15-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 1-мĕшĕччен ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче çĕртме сухи тăвассипе конкурс ирттерме йышăннă.

Çĕнтерӳçĕсене палăртнă чух чи нумай ĕç калăпăшĕ пурнăçланине, агротехника требованийĕсене, хăрушсăрлăх техникине, ĕç дисциплинине пăхăннине шута илеççĕ.

Эрнери суха нормисене пурнăçланине кура сухара ĕçлекенсене çак йĕркепе премилеме пăхнă:

1,4 т.с класлă тракторсем енĕпе (МТЗ-80, МТЗ-82) – 39 гектар.

1-мĕш вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство, вымпел).

2-мĕш вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство).

3-мĕш вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

3 т.с класлă тракторсем енĕпе (ДТ-75) – 50 гектар.

1-мĕш вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство, вымпел).

2-мĕш вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство).

3-мĕш вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

5 т.с класлă тракторсем енĕпе (Т-150, Т-150К, МТЗ-1221, ВТ-100) – 73 гектар.

1-мĕш вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство, вымпел).

2-мĕш вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство).

3-мĕш вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

Çĕртме сухи тăвакан механизаторсен районти ăмăртăвĕнче мала тухнисем валли 3 преми палăртнă:

1-мĕш вырăн – 600 тенкĕ тата лента, 1-мĕш степеньлĕ диплом.

2-мĕш вырăн – 500 тенкĕ, 2-мĕш степеньлĕ диплом.

3-мĕш вырăн – 400 тенкĕ, 3-мĕш степеньлĕ диплом.

Конкурс итогĕсене пĕтĕмлетме комиссии туса хунă, унта çаксене кĕртнĕ:

А.Н. Иванов, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, комисси председателĕ;

Ф.Ф. Григорьева, агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ, комисси председателĕн çумĕ;

П.П. Замятина, патшалăх вăрлăх инспекцийĕн районти филиалĕн пуçлăхĕ, комисси членĕ;

А.И. Павлов, район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ, комисси секретарĕ;

А.П. Белов, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат сотрудникĕ, комисси членĕ.

Мала тухнă механизаторсене премисене, свидетельствосемпе вымпелсене ĕçри ларутăрура пама, конкурс итогĕсене эрнесерен район хаçатĕнче çутатма йышăннă.

Ял хуçалăхĕнче

## Утарçăсен канашлавĕ

Майĕпен çуллахи ăшă кунсем хыçа юлма пуçларĕç. Кĕр кунĕ çитесси те инçех мар, çавăнпа та хурт-хăмăр ĕрчетекенсен пыл юхтарса илнĕ хыççăн пĕр тăхтамасăр тумалли ĕçсем нумай. Вĕлле хурчĕсене хĕле кĕме хатĕрлес ыйту пирки тĕплĕнрех канашлама августăн 17-мĕшĕнче ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн специалисчĕсен республикăри хурт-хăмăр агенствин агропромышленность комлексне кĕрекен ял хуçалăх предприятийĕсенчи утарçăсем тата харпăрхăй килĕнче вĕллесем тытакансем пухăнчĕç.

Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов уçрĕ, район аталанăвĕпе пĕтĕмĕшле паллаштарчĕ. Çавăн пекех хуçалăхсенчи хурт-хăмăр отраслĕ çине пысăкрах тимлĕх уйăрма кирлине, ку ĕçĕн тупăшĕ пуррине палăртрĕ.

Пухăннисене ЧР Ял хуçалăх министерствин "Хурт-хăмăр ĕрчетес енĕпе ĕçлекен агентстви" патшалăх унитарлă предприятийĕн Муркаш районĕнчи хурт-хăмăр ĕçĕн зоотехник-хатĕрлевçи П.В. Семенова районти утарсен аталанăвĕпе паллаштарчĕ, кĕрхи ĕçсем çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

– Хуртсем лайăх хĕл каçчăр тесен, пирĕн халех тимлемелле. Чир-чĕрсĕр, вăйлă çемьесем кăна лайăх чăтса ирттереççĕ хĕл сиввисене. Енчен те кирлĕ чухлĕ пыл тумасан, сахăр сиропĕпе тăрантармалла. Çавăн пекех чир-чĕртен сывatassи тата профилактика ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрма ыйтасшăн. Ку тĕлĕшпе, чире кура, "Ноземат", "Тимас", "Фумисан", "Апифит" препаратсемпе усă курмалла. Препаратсене хĕл каçма вĕллере хăвармалла мар. Утарта пĕр çемье чирлет пулсан, пурне те вăхăтра сиплемелле. Çитес çуркунне хуртсем еплерех вĕçсе тухасси эпир паян туса ирттернĕ ĕçсенчен килет. Вĕсенчен паха продукци туса илесси те – август уйăхĕнче тунă ĕçĕн никĕсĕ.



Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци специалисчĕ Л.А. Бояринова пыл хурчĕсен чирĕсем йышлă, çавăнпа та лабораторие пырса тĕрĕслеттермелле, çине тăрса кĕрешмелле тесе пĕлтерчĕ. Утарсенче дезинфекци тăвасси çине те пысăк тимлĕх уйăрмалла. Çавăн пекех кашни утарçăн ветеринарипе санитари паспорчĕ пулмалла. Çакă хурт-хăмăр чирĕсене вăхăтра тупса палăртма, вĕсене çийĕнчех сиплеме пулăшать.

"Приокский" ăратлă хуртсем ĕрчетекен хуçалăх ертӳçи В.Л. Хлебников утарти çĕнĕлĕхсемпе паллаштарчĕ. Малашне туса ирттермелли ĕçсем çинче чарăнчĕ.

Ĕçлĕ канашлу питĕ вырăнлă, пуриншĕн те усăллă пулчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: канашлăва хутшăннисем.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Хуракасси выççăлкинче пурăнакан юратнă мăшăра тата аттепе кĕрĕве, ăшпиллĕ хуньстарике, ырă кăмăллă асаттепе кукаçие, ялан тараватлă хăтана тата пуринпе те тимлĕ тăвана **Виталий Васильевич ФЕДОРОВА** кун-çула ĕçре ирттерсе 60 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çакăн çумне паян эпир сана пĕрле пулса çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çемьере тату пурнăç сунатпăр.

Çывăх тăванăмăр Виталий Васильевич! Эсĕ ĕç ĕмĕрне "Свобода" хуçалăхри строительсен бригадинче ирттерсе хăвăн ăсталăхупа тăван ялта, хуçалăхра пиренĕшĕн ырă ят турăн, хăвăн ĕçӳпе хăвна валли сумлă палăк лартрăн. Тавах сана йывăрлăхсем умĕнче пуç усманшăн.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрĕвĕ, 6 мăнукĕ, çывăх тăванĕ-хурăнташĕсем.**



Кĕрекаç ялĕнче пурăнакан **Лидия Тимофеевна СЫЛГАЧЕВАНА** çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр, сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Малашне те пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

**Салампа: хĕрĕсем, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**